26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944 ЯНВАРЬ 4 ЫТЛАРИКУН 3(6498) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем паян, январĕн 3-мĕшĕнче, танковăй соединенисемпе пехота вăйлă наступлени тунипе, НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулине — пысăк чугун çул узелне тата нимĕçсен оборонин питĕ кирлĕ опорнăй пунктне—штурмласа тытса илнĕ.

НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ПУХОВ генерал-лейтенантăн, КИРЮХИН генерал-майорăн çарĕсем тата танковăй çарсен генерал-майорĕ АНИКУШКИНАН танкисчĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

КИСЕЛЕВ генерал-майорăн 140-мĕш стрелковăй Сибирски Новгород-Северски дивизийĕ, ОРЛОВ полковникăн 149-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ПАНКРАТОВ генерал-майорăн 287-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ГРАНОВСКИЙ полковникăн 111-мĕш танковăй бригади, ШАЛЫГИН полковникăн 162-мĕш танковăй бригади, ПЕТУШКОВ полковникăн 175-мĕш танковăй бригади, ИЛЬИН генерал-майорăн 20-мĕш мотострелковăй бригади, КОРОЛЕВ майорăн 1829-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ тата СЕДОВ подполковникăн 41-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас тесе, НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИ» тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

149-мĕш стрелковăй Новоград-Волынски дивизийĕ,
287-мĕш стрелковăй Новоград-Волынски дивизийĕ,
111-мĕш танковăй Новоград-Волынски бригади,
162-мĕш танковăй Новоград-Волынски бригади,
175-мĕш танковăй Новоград-Волынски бригади,
20-мĕш мотострелковăй Новоград-Волынски бригади,
1821-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен Новоград-Волынски артиллери полкĕ,
41-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен Новоград-Волынски артиллери полкĕ.

140-мĕш стрелковăй Сибирски Новгород-Северски дивизийĕ, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскере, ХЕРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 3-мĕшĕнче, 20 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулине ирĕке кăларнă паттăр çарсене çĕр çирĕм тăватă тупăпа вунпĕр хут хăрах персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусене хутшăннăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи январĕн 3-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 2-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. 40 ял ытла тытса илнĕ, çав шутра—ВЕРХИТНО, ЛАХНЫ, БАРКАНЫ, БУДАЕВКА, КУБОК, РОЖНОВА, ЖУКОВО ят ялсем.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, Житомир облаçĕнчи МАХЛЕВСК тата ТРОЯНОВ ятлă район центрĕсене çапăçса тытса илнĕ, çав пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра—РАДОВЕЛЬ, МОКЛЯКИ, КУЛИШИ, СЛОБОДКА, АНДРЕЕВИЧИ, НЕМЕЛЯНКА, УЖАЧИН, РОМАНОВЕЦКАЯ СЛОБОДКА, РОМАКОВКА, БРОНИКИ, ЧЕРНИЦА, ДЗИГУНКА, КАМЕННЫЙ БРОД, ДЕРМАНКА, ПРУТОВКА, ЖЕЛТЫЙ БРОД, ДЕНЕШИ, ЖЕЛЕЗНЯКИ, ГВАЗДАВА, РЕЯ, СЕМАКИ, ХАЖИН, ЖЕЖЕЛЕВО, ФЛОРИАНОВКА, ГУБИН, ОВСЯНИКИ, СТЕПАНКИ, ЧЕРЕМАШНОЕ, МАЛИНКИ, БОРЩАГОВКА, МАРМУЛИЕВКА, РУДЬЧЕНКИ, РОГОЗНО, ГОРОДИЩЕ, ЧЕРЕПИН, ЛОБАЧЕВ, ФАСТОВКА, ЩЕРБАКИ, ФЕСЮРЫ ятлă пысăк ялсене тата ДРОВЯНОЙ ПОСТ, РАДОВЕЛЬСКАЯ, ПОЯСКИ, ВЕРОВКА, РЫХАЛЬСКАЯ, ВЕЧНИЦА, КАРДЫШЕВКА ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Январĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 85 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 11 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Пĕр гвардейски часть ирхине ирех тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапнă та хаяррăн çапăçнă хыççăн унăн çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ. Тепĕр районра пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçнă, 40 ял ытла тытса илнĕ. Виçĕ кун хушши çапăçса, çав участокра тăшман пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 34 тупă, миномётсем, пулемётсем, боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Житомир облаçĕнчи Мархлевск ятлă район центрне тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет боецĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, Житомир облаçĕнчи Троянов район центрне тытса илнĕ. Нимĕçсем васкаса резервсем илсе пынă та темиçе участокра темиçе хут та контратака тунă. Пирĕн çарсем тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă, хăвăрттăн малалла куçса пырса, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен 150 яла ытла тата темиçе чугун çул станцине тасатнă. Тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тӳсет. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен 4.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 68 танк, 29 хир туппипе хăй тĕллĕн çӳрекен тупă тата 9 бронетраспортер пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем трофейăсем тытса илнĕ, çав шутра—пĕтĕмĕшпех юсавлă 14 танк, 12 бронетраспортер, 60 тупă, 200 пулемет ытла, 580 автомашина, 400 вагона çити, 4 поезд тата çар материалĕсем, боеприпассем, снаряжени хунă 7 склад. Чылай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕрти флотăн çыран хĕрринчи батарейисем тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен баржине тата хуралта çӳрекен катерне шыва путарнă.

* * *

Ровно облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ декабрĕн 13-мĕшĕнче шоссе çулĕн пĕр участокне миналаса хунă. Партизансем хунă минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен 8 танкĕ тата пĕр танкетки сирпĕнсе кайнă. Партизансен пĕр ушкăнĕ декабрĕн 14-мĕшĕнче боеприпассем турттарса пыракан 8 грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, совет патриочĕсем нимĕçсен фронт патнелле горючи турттарса каякан эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 47-мĕш артиллери полкĕн 2-мĕш дивизионĕн командирĕ Гейнц Норден капитан, Балтика сывăхĕнчи 1-мĕш фронтра тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Нимĕç çарĕ пĕр чарăнмасăр чакса пыни тата калама çук пысăк çухатусем тӳсни салтаксен çапăçас кăмăлне хавшатрĕç. Вырăссем Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçни офицерсене уйрăмах хытă пăшăрхантарчĕ. Невель районĕнче нимĕçсен оборонине татни (унта пирĕн артиллери питĕ нумай пулнă) хăратсах ӳкерчĕ. Сталинград хыççăн салтаксем халь флангсенчен иртсе кайса çавăрса илессинчен питĕ хăраççĕ. Офицерсем çапла шутлаççĕ: нумай вăхăт та иртмĕ—вăрçă нимĕç территорийĕ çине куçĕ, теççĕ. Фронт линийĕ кĕскелмест, вăл вăрăмланса пырать тата хĕвеланăçнелле куçнăçемĕн куçса пырать. 1943 çулхи вăрçă ĕçĕсем мана Германия ку вăрçăра аяла пулнине татăклăнах кăтартса пачĕç. Тĕнчере нимĕнле вăй та ĕнтĕ нимĕç çарне аркатассинчен çăлса хăварма пултараймасть. Вăрçă мĕн чухлĕ вăрăма тăсăлĕ, Германия тӳсес катастрофа та çавăн чухлĕ хăрушăрах пулĕ».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Кировоград облаçĕнчи Ленинский, Дьяки тата Вдовин Хутор ятлă хуторсенче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «1943 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче нимĕçсем Вдовин Хутор, Дьяки тата Ленинский ятлă хуторсене нимĕç юлмиччен çунтарса ячĕç тата çав хуторсенче пурăннă мирлĕ çынсене пурне те тенĕ пекех вĕлерсе пĕтерчĕç. Вутра 276 кил мĕнпур çурт-хуралтăсемпе тата колхозниксен пурлăхĕсемпе пĕрле çунса кайрĕ. Гитлеровецсем хĕрарăмсемпе старриксене тата ачасене, пурĕ 1.070 çынна, персе, çунтарса, пăчăхтарса вĕлерчĕç. Анна Семениченкăна тата унăн 6 çулхи ывăлне Андрее нимĕçсем чĕрĕллех çăла (тарасана) пăрахрĕç. Гитлеровецсен ирсĕрĕсем Ульяна Чеполăн куçĕ умĕнчех унăн пĕр çулхи ачине вĕлерчĕç, унтан вара ăна хăйне те персе вĕлерчĕç. Фашистсен çынвĕлеренĕсем суд умне тăрса хăйсен тискер ĕçĕсемшĕн тивĕçлипе ответ тытĕç, тесе эпир хытă шанса тăратпăр».

Акт çине алă пуснă: Гридюшко майор, Поляков майор, медицина службин капитанĕ Ващенко, старши лейтенант Барахта, хуторта пурăнакан çынсем—Лука Ворона, Давыд Семениченко, Василий Ворона, Николай Семениченко, Тимофей Семениченко.

Тракторсене юсас ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарар

Колхоз производствинче тракторсемпе тата ялхуçалăхĕн ытти машинисемпе йышлăн усă кураççĕ. Колхозри ĕçсене нумайĕшне машинăсемпе тăваççĕ. МТС-сен тракторĕсемпе машинисем вăрçăччен хи вăхăтра та колхозсен ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вара, тракторсемпе ытти машинăсен вырăнĕ татах та ытларах ӳсрĕ.

1943 çулта пирĕн республикăри нумай МТС-сем тракторсемпе тумалли ĕçе ытлашшипех пурнăçларĕç. Вĕсен шутне Вăрнар, Елчĕк, Йĕпреç, Шăхасан тата ытти МТС-сем кĕреççĕ. МТС-сем ăнăçлă ĕçлени пирĕн колхозсене тырпула вăхăтра пухса илме нумай пулăшрĕ.

Сталин юлташ, Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче малашнехи кĕрешӳре йывăрлăхсем пуласси палăртса, ырханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкмаш-кăн пĕтĕм совет халăхне татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнчĕ.

Çав чĕнĕве ответлесе, колхозниксемпе колхозницăсем, хăйсен пĕтĕм вăйне хурса, çитес çул татах та тухăçлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешме тытăнчĕç. МТС-сенчи рабочисемпе служащисен çав ĕçре колхозсене тăтăшах пулăшса пымалла.

Горький облаçĕнчи Каменка МТС коллективĕ, машинăсемпе тракторсен паркне юсанă çĕрте ĕçлекен мĕнпур рабочисемпе работницăсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене çапла чĕнсе каларĕ: «Пирĕн çĕршывпа фронт умĕнчи тивĕç вăл—Хĕрлĕ Çарпа çĕршыври халăхсене тырпул, аш-какай, сĕт-çу, пахча-çимĕçсем тата çĕрулми, промышленноçа—ялхуçалăх чĕр-таварĕсем татти-сыпписĕр парса тăма колхозсене пулăшасси пулать. Çак хисеплĕ ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма МТС-сенчи тракторсене, комбайнсене [illegible] ытти ялхуçалăх машинисене çитес çулхи уйхир ĕçĕсене тума вăхăтра тата лайăх юсаса хатĕрлес пулать».

Каменка МТС коллективĕ машинăсемпе тракторсен паркне юсанă çĕрте Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнет. Çав чĕнсе калание пирĕн республикăри МТС-сен коллективĕсем ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç, ăна сӳтсе-явнă чухне тракторсемпе машинăсене юсас тĕлĕшпе çĕнĕ обязательствăсем йышăнаççĕ. Çапла, Йĕпреç МТС-ĕнче тракторсемпе машинăсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекенсем тракторсемпе вĕсен çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре тата комбайнсен моторĕсене январĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитерме сăмах панă.

Тракторсене юсасси чылай МТС-сенче аван пырать. Тракторсене юсамалли IV-мĕш квартал планне срокчен тултарнăшăн Йĕпреç, Вăрнар, Красноармейски, Шупашкар, Комсомольски, Канаш тата Елчĕк МТС-ĕсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ. Тракторсене юсас тĕлĕшпе Куславкка, Ишлей, Элĕк, Сĕнтĕр тата Чкаловски МТС-ĕсем те начар мар ĕçлеççĕ.

Анчах çав вăхăтрах Улатăр, Çĕмĕрле, Тăвай, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Первомайски, Шăмăршă МТС-ĕсем тракторсемпе машинăсене юсас ĕçре чăтма çук юлса пыраççĕ-ха. Улатăр МТС-ĕ декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тракторсем юсамалли IV-мĕш квартал планне пурĕ те 33,3 процент, Çĕмĕрле МТС-ĕ 40 процент кăна пурнăçланă. Çав МТС-сем юлса пыни, чи малтанах, ĕçе йĕркелеме пĕлменнинчен, çак ĕçĕн ответлăхне туйманнинчен килет.

Кашни МТС-рах малта пыракан çынсем пур. Вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пĕлӳлĕхне тракторсемпе машинăсене лайăх юсас ĕçе хураççĕ. Малта пыракан çынсене пулăшса пырса, вĕсен ĕçĕнчи паха опытпа мĕнпур ремонтниксене паллаштармалла, ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла. Çакă вăл МТС директорĕсен, МТС-сенчи партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен хисеплĕ задачи пулса тăрать. Малта пыракан çынсене яланах пысăк хисепе хунипе пĕрлех, япăх ĕçлекенсене, наянсене, ĕç дисциплинине пăсакансене çирĕп ответ тыттармалла.

Хĕллехи тапхăрпа туллин усă курмалла, МТС-че большевикла йĕркелĕх тумалла. Машинăсене юсанă хыççăн лайăх тирпейлесе лартмалла, тракторсен тата ытти машинăсен хăвăрт пĕтекен пайĕсене ытларах хатĕрлесе хумалла.

Республикăри уйрăм заводсене МТС-семпе колхозсене кирлĕ машина пайĕсене хатĕрлеме заданисем панă. Çав заданисене кашни заводăн пĕр пăркаланмасăр вăхăтра пурнăçламалла.

МТС-сенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем хушшинче халĕ, Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕн коллективĕ чĕнсе каланине сӳтсе-явнă май, кашни рабочипе служащине социализмлă ăмăртăва явăçтармалла. ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ А. А. Андреев юлташăн тракторсене юсамалли плана вăхăтра тата лайăх пурнăçа кĕртнĕшĕн премилесси çинчен кăларнă приказне МТС-сенче ĕçлекен мĕнпур рабочисемпе служащисене ăнлантарса памалла, çав премисене илессишĕн кашни рабочин пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Тракторсемпе машинăсене юсамалли уйăхри плансене ăнăçлă пурнăçласа пыракан республикăсене, крайсене тата облаçсене пама Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен 5 ялавне çирĕплетнĕ. Çав Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулнă республикăсемпе крайсене тата облаçсене ялавпа пĕрле 300-шер пин тенкĕ преми параççĕ. Унсăр пуçне тракторсемпе машинăсене юсамалли уйăхри плансене ăнăçлă пурнăçласа пыракан МТС-сене пама ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен 35 Хĕрлĕ ялавне тунă тата çав ялавпа пĕрле 20-шер пин тенкĕ преми памалла тунă.

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавпа премие илессишĕн халь кашни МТС-ăн социализмлă ăмăртăва хутшăнмалла.

МТС-сенче ĕçлекенсем Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнче ответлă экзамен тытаççĕ. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерӳĕсем тракторсемпе машинăсене юсас ĕçре ĕçлекенсене хавхалантарса çĕнĕ вăй кӳреççĕ, тылри ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсем тума чĕнеççĕ.

МТС-сенчи рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксемпе служащисем, тракторсемпе машинăсен паркне юсас ĕçре Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнăр!

Тракторсемпе машинăсене лайăх юсаса, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине большевикла кĕтсе илер! Пĕтĕм вăйсене фронта пулăшнă çĕре парар!

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕнче

Районсенчи, хуласенчи, поселоксемпе ялсенчи ĕççынни депутачĕсен Совечĕсене суйлассине тепĕр срока хăварасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çапла йышăннă:

Чăваш АСС Республикинчи районсенчи, хуласенчи, поселоксенчи тата ялсенчи ĕççынни депутачĕсен Совечĕсене суйлассине 1944 çулхи декабрь уйăхĕччен хăварас тата вĕсен полномочийĕсене çак срокчен тăсас.

Çĕрулми тăрри хатĕрлеççĕ

Çĕрпӳри фельдшер шкулĕнче вĕренекенсемпе комсомолецсем çĕрулми тăррисене вăрлăхлăх касса хатĕрлеме тытăнчĕç. Çĕрулми тăррисем чылайĕшĕ касса хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Кашни вĕренекен 8 килограмран кая мар çĕрулми тăрри хатĕрлеме пулнă.

П. МИТРОФАНОВ.

Смотр активлăн иртет

СЕНТЕР, январĕн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Пиллĕкмĕш кун ĕнтĕ район центрĕнче художествăллă пултарулăх смотрĕ пырать. Малтанхи кун Муркаш шкулĕ «Ылттăн аласем», Пашалукасси шкулĕ «Дурак», Кăшмаш шкулĕ «Ялта» ятлă пьесăсем лартса пачĕç. Куракансем уйрăмах Пашалукасси шкулĕн выступленине кăмăлларĕç.

Смотрăн 2-мĕш кунĕнче Юнга тата Кăпас шкулĕсен коллективĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Пушкăрт, Янăм, Оринино тата Ильинка шкулĕсенчи тата колхоз çамрăкĕсен пултарулăх кружокĕсем те смотра активлăн хутшăнчĕç. Смотр январĕн 15-мĕшĕччен пырать.

М. КАРПОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Сӳрĕк ĕçлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Районри малта пыракан колхозсем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. «Заря» колхоз (председателĕ Я. Тихонов юлташ) вăрлăхсене çителĕклĕ уйăрса хунă, сортласа пĕтернĕ. Плугсемпе машинăсене юсаса лартнă. Урхăшри «Звезда» тата Тимошенко ячĕпе тăракан колхозсем те çуракине ăнăçлăн хатĕрленеççĕ. Унта вăрлăхсене сортласа машинăсене юсаса пĕтернĕ. Колхоз членĕсем халь юр тытас тĕлĕшпе хĕрсе ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне Тимошенко ячĕпе тăракан колхозра 50 гектар çинче ытла юр тытнă.

Анчах районра çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман колхозсем те пур-ха.

«Дружба» колхозăн иртнĕ çул, çуракине япăх хатĕрленнĕ пирки, тырри начар пулчĕ. Çак колхоз, хăйĕн иртнĕ çулта тунă йăнăшĕсене шута илмесĕр, кăçал та çуракине чăтма çук начар хатĕрленет. Ку колхозăн вăрлăхĕсем çитмеççĕ, пур пек вăрлăхсене те сортлама тытăнман, машинăсемпе ялхуçалăх инвентарьне юсама пуçламан.

«Вулкан» колхозра вырăнти удобренисене пухма тытăнман, колхозниксем кĕле урам хушшине тăкаççĕ.

«Культура» колхозăн (председателĕ Николаева юлташ) 18 плуг, 2 сеялка юсамалла, анчах вĕсене юсасси çинчен шухăшламаççĕ те.—Çуракиччен тем те тума пулать-ха,—тесе лăпланса лараççĕ. Ку колхозăн вăрлăхĕсем те çитмеççĕ. Колхозниксене юр тытма мобилизацилемен.

Юр тытас ĕçе нумай колхозсенче тытăнман-ха.

Районри колхозсем декабрь уйăхĕнче уя 120.000 лав тислĕк кăларас вырăнне 11.000 лав кăна кăларнă. Район вăрлăх сортлас енĕпе те юлса пырать.

Çуракине хатĕрленес ĕçре халех улшăну тумалла.

А. ХАТАЕВСКИЙ.

Вăйлă тырпул звенисем

Вăрнар районĕнчи 25 колхозра çамрăксен вăйлă тырпулшăн кĕрешекен звенисем ĕçлеççĕ. 1943 çулта вĕсем кашниех вăтамран 110—115-шер пăт тĕштырă туса пачĕç. Вĕсем çитес çулта татах та тухăçлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

190 çын вĕренсе тухрĕ

Ĕнер Шупашкарта колхоз председателĕсен пĕр уйăхлăх курсĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Курсран пурĕ 190 çын вĕренсе тухрĕ. Пĕр уйăх хушшинче вĕсем ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе тĕрлĕ лекцисем итлерĕç. Лекцисене Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи преподавательсем—Корнеев доцент, Пельцих профессор тата ыттисем те вуларĕç.

Кашни вĕллерен 30 килограмм пыл илнĕ

КАЛИНИНО. (**Хамăр корр.**). «Чăваш Коммуни» колхозăн пчеловочĕ Никонов юлташ кăçал кашни вĕллерен 30 килограмм ытла пыл илнĕ.

Никонов юлташ хăйĕн ĕçне питĕ юратса тăвать. Вăл çу каçичченех утарта пурăннă. Уйăрлакан кашни çемьене тĕрĕс вырнаçтарнă. Пĕр çемье те урăх çĕре вĕçсе кайса çухалман. Çапла вара кăçал 41 çемье çĕнĕрен хутшăннă.

Пыл сутса, кăçал колхоз 61 пин тенкĕлĕх тупăш тунă, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх 60 пăт ытла пыл валеççе панă.

Пупин пчеловодăн мухтава тивĕçлĕ ĕçĕ

ЭЛЕК. Турханти «Звезда» колхоз членĕ И. Пупин юлташ колхозра пчеловод пулса ĕçлет. Кăçал вăл тăрăшса ĕçленипе колхоз [illegible] тан пысăк тупăш илчĕ. 39 вĕллерен 1.566 килограмм пыл илнĕ. Çапла, кашни вĕллерен вăтамран 40 килограмм пыл илнĕ.



Ӳкерчĕк çинче: Чкаловски районри «Осоавиахим» колхозри малта пыракан 4-мĕш бригадăн бригадирĕ Э. Ф. Яраханов юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Ăмăртăва тухнă хыççăн

КАЛИНИНО, январĕн 3-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Шĕнертри «1-ое мая» колхоз членĕсем, вăйлă тырпулшăн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пĕтĕм ĕçе хăвăртлатрĕç. Колхозра агротехникăна вĕренмелли кружок йĕркеллĕ ĕçлет. Ăна колхоз председателĕ В. Иванов юлташ ертсе пырать. Занятисене яланах практикăллă ĕçсемпе çыхăнтарса пыраççĕ. Халĕ колхозниксем 55 гектар çинче юр тытнă, уя 1050 лав тислĕк кăларнă, 63 центнер кĕл, 54 лав кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 30 лав фекали кăларнă. Акмалли вăрлăхсене çителĕклĕ таран сортласа хунă, вĕсем шăтма юрăхлине тĕрĕсленĕ.

Гектартан 100-шер пăт тыра туса илессишĕн пыракан ăмăртура 2-мĕш бригада малта пырать. Кунта кашни колхозникех вăйлă тырпулшăн мĕнле те пулсан усăллă ĕç тума тăрăшать.

Çавăн пекех «Большевик» колхоз членĕсем те çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Паянхи куна вĕсем 80 гектар çинче юр тытнă, уя 900 лав тислĕк кăларнă, акмалли вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех сортласа хунă.

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкарти табак фабрикинчи паллă стахановка **А. Н. Савичева** юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ÇĔНĔ ÇУЛТА ÇĔНĔ ВĂЙ-ХĂВАТПА ĔÇЛĔПĔР

1943 çулта ширĕн завод начар мар ĕçлерĕ. Завод коллективĕ, производствăри хăшпĕр йывăрлăхсене пăхмасăр, çулталăкри плана срокчен пурнăçларĕ. Декабрь уйăхĕнчи плана 285 процент тултарчĕ. Уйрăмăнах А. Гусевăпа А. Палева юлташсен бригадисем аван ĕçлеççĕ. З. Галкина, А. Терентьева, А. Корчагина стахановкăсем кашни уйăхрах задание 150 процента çити тултараççĕ. Кочегар В. Камбулов юлташ пĕччен икĕ çыншăн ĕçлет. Завод лайăх ĕçлесе пыни главнăй инженер Зиминов, цех начальникĕ Воронкова юлташсем ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлнинчен те нумай килет. Вĕсем заводри рабочисемпе работницăсене ĕçре тăтăшах пулăшса, вĕрентсе пыраççĕ.

Эпир 1944 çулта татах та лайăхрах ĕçлеме пулатпăр. Ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, фронтпа çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлама пулатпăр.

А. ВОВЧАК,
Сĕнтĕрвăрринчи спирт заводĕн директорĕ.

Плăнран ирттерсе 75 пин тенкĕлĕх продукци патăмăр

1943 çулăн пуçламăшĕнче Катекри (Канаш районĕ) кирпĕч тăвакан завод ĕç планне уйăхсерен тултарса пырайман. Завод ĕçре юлса пыни кашни рабочипе работницăна пăшăрхантарнă. Завод юлса пынин тĕп сăлтавĕ—ĕç вăйĕпе туллин усă курманни, ăна тĕрĕс вырнаçтарса тухманни пулнă.

Эпир 1943 çулта çулталăкри планран ирттерсе 50 пин тенкĕрен кая мар продукци кăларма обязательство илтĕмĕр. Ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ятăмăр, ĕç тухăçлăхне куллен-кун хăпартса пытăмăр.

Завод коллективĕ 1943 çулхи производство планне ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 140 процент пурнăçларĕ. Тăмран чашăк-тирĕк тăвакан цех (мастерĕ И. Марфин юлташ) çулталăкри плана 11 уйăх хушшинче 150 процент таран пурнăçларĕ.

1943 çулта завод коллективĕ çулталăкри планран ирттерсе 75 пин тенкĕлĕх продукци кăларчĕ.

П. ЖУРАВЛЕВ,
Завод директорĕ.

Тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕсем

Татьяна Иванова

Колхоз уйхирĕнче тракторсем ĕçлеме тытăннă вăхăтра çуралнă Татьяна Ивановăн чĕринче трактористка пулас ĕмĕт. Вăл ун чухне вунпилĕк çулта кăна пулнă, анчах хăйĕн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕресси çине яланах шанса тăнă.

Пĕррехине «Трактор» колхоза Патĕрьел МТС бухгалтерĕ пынă. Вăл колхоз председательне Творогов юлташа трактористсен курсне пĕр хĕрача уйăрса ямалли çинчен пĕлтернĕ.

— Акă ĕнтĕ, тинех ĕмĕт пурнăça кĕрет,—тесе шутланă Татьяна Иванова. Унтан вăл хăйне курса ямайĕтса, колхоз председателĕ патне пынă.

— Яратпăр,—тенĕ колхоз председателĕ Творогов юлташ,—хатĕрленĕр...

...Хĕрӳллĕ вĕренӳ кунĕсем. Татьяна Илларионовна Иванова трактористсен курсĕнче хăйĕн пултарулăхне часах кăтартнă. Вăл отлично вĕреннĕ, çав вăхăтрах хăйĕн юлташĕсене те пулăшнă.

Трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Татьяна Иванова Чкаловски МТС-ри паллă тракторист В. Северов юлташăн бригадинче ĕçлеме тытăнать. Çакăнта вăл хăйĕн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнине куллен-кун ытларах та ытларах туйса пынă.

Урапаллă тракторпа кунсерен 4 гектар сухаламалла пулнă. Татьяна Иванова яланах 7—8 гектар сухаланă. Çапла, пĕр çулталăк хушши стахановла ĕçленĕ хыççăн, ăна комбайнерсен курсне вĕренме яраççĕ.

Çулталăк хушши вĕреннĕ унта Иванова юлташ. 1938 çулта вăра çĕнĕ професси туянса, колхоз хирĕсенче ĕçлеме тавăрăннă. Комбайнпа вăл çулсерен 400—500 гектар вырса, виçĕ çыншăн ĕçленĕ. 1939 çулта Татьяна Ивановăн пурнăçĕнче пысăк савăнăç пулнă. ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн приказĕ тăрăх, комбайнпа лайăх ĕçленĕшĕн, техникăна тĕплĕн вĕренсе алла илнĕшĕн ăна комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕн ятне панă.

Мастер! Пысăк тата чыслă ят. Çак хисепшĕн Иванова юлташ саваннă, хăйĕн ятне яланах çӳлте тытса пынă. 1940 çулта вăл татах та тухăçлăрах ĕçленĕ. 500 гектара яхăн тырă вырнă вăл. Çавăн пек нумай вырнă комбайнерсем Чкаловски МТС-ĕнче урăх пулман.

Чкаловски районри «Канаш», «Путь Ленина», «Звезда» тата ытти чылай колхозсен хирĕсенче Иванова юлташăн уйхир карапĕ тулăх тырпула пĕр тăкаксăр вырса пуçтарнă. Çав колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем Иванова юлташăн паха та тава тивĕçлĕ ĕçĕсене нихăçан та манас çук.

1941-мĕш çул. Ирсĕр нимĕç захватчикĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнчĕç. Пĕтĕм совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме çĕкленчĕ. Кашни совет ĕççыннийĕ, алла хĕçпăшал тытса, нимĕçсене пĕтерсе тăкма фронта каясшăн çунса тăнă.

Кипечри «Трактор» колхозран вăйпитти арçынсемпе пĕрле колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Портнов юлташ та фронта тухса кайнă. Колхоза ертсе пыма председатель кирлĕ пулнă. Колхозниксем: «Кама колхоз председателĕ тумалла-ха?» — тесе шутланă. Нумайĕшĕсем тӳрех Татьяна Илларионовна Ивановăна колхоз председателĕ пулма суйлама кăмăл тунă. Вăра вĕсем хăйсен пухăвĕнче Татьяна Ивановăна пĕр кăмăлпа колхоз председателĕ пулма суйланă.

Иванова юлташ çак ответлă ĕçре хăйĕн пĕтĕм вăйне колхозра фронтри пек ĕçленĕ çĕре, вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешнĕ çĕре панă. Вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлени лайăх çимĕçсем панă. Колхоз 1942 çулхи çуракине ăнăçлăн ирттернĕ. Çав çул колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 14 центнер тĕш тырă пухса кĕртнĕ. Уйрăм культурăсем тăрăх тырпул тухăçлăхĕ татах та ытларах пулнă. Çапла вăра колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 2-шер килограмм ытла тырă валеçсе панă. Колхоз председательне Татьяна Ивановăна юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Татьяна Иванова колхозниксене пуян пурăнакан тăвас, фронт умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăça кĕртес тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Эпир ăна каçхине 24 сехет тĕлнелле колхоз канцелярийĕнче тĕл пултăмăр. Вăл бригадирсем валли нарядсем çырса хатĕрленĕ те ыранхи ĕçсем çинчен шухăшласа ларать.

Колхозра тимĕрçĕ çук. Плугсене юсаса пĕтермен. Анчах ку ĕçе кам та пулин туса парасси çине шанмалла мар. Иванова юлташ çав ĕçсене çывăх вăхăтрах тума майсем шыраса тунă.

Колхоз пысăк мар, унта пурĕ те 74 хуçалăх кăна. Кашни хуçалăхри çемье тата фронтри кашни боец тутă пултăр тесен, тырпул нумай туса илмелле. Çак шухăшсем Иванова юлташăн пуçĕнчен нихăçан та тухмаççĕ. Иртнĕ 1943 çулта колхоз ĕçкунĕ пуçне 3 килограмм тырă валеçсе панă. Кăçал тата та ытларах валеçмелле тăвас пулать. Çавăн пек тĕллевпе организацилесе пырать Иванова юлташ колхозри мĕнпур ĕçсене.

1943 çулта колхоз выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе те чылай çитĕнӳсем тунă. Выльăх-чĕрлĕхсене усрама çĕнĕ вите, пăрусем валли çĕнĕ пӳрт, сурăхсем валли сарай тунă. Выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетмелли государство планне ытлашшипех тултарнă.

Колхозниксем фронтри боецсемпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 9 мăшăр çăматă, 4 кĕрĕк пиншак, 25 мăшăр çăм алшиш тата ытти нумай ăшă япаласем ярса панă.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарнă, 1944 çулшăн аванс шучĕпе 275 центнер тырă панă. Государствăна ашхакай памалли плана 1944 çулшăн та ирттерсе тултарнă ĕнтĕ.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем колхозниксене вĕçĕмсĕр савăнтараççĕ. Иванова юлташ ертсе пыракан «Трактор» колхоз членĕсем государствăна 6.000 пăт тырă сутнă. Колхоз председателĕ, çамрăк коммунистка Татьяна Иванова хăйĕн хуçалăхĕнче перекетленĕ тырра 80 пăт сутса çиийĕнчех хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Татьяна Иванова Тăван çĕршыв умĕнче мухтава тивĕçлĕ ĕç турĕ.

— 1943 çул пирĕншĕн çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсен çулĕ пулчĕ,—тет Татьяна Иванова.—Колхозниксемпе колхозницăсем уйхирсенче пархатарлăн ĕçлерĕç. Çапла эпир райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне кăçал та хамăр аллăрах хăварма пултартăмăр.

Халĕ колхозра çитес çул вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешӳ хĕрсе пырать. Колхозниксем уя тислĕк кăлараççĕ, вăрлăх сортлаççĕ. Вĕсем пурте пĕр шухăш-кăмăлпа—фронтпа Тăван çĕршыва тырпул татах та ытларах парса тăрас туйăмпа ĕçлесе пурăнаççĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Комсомольски район, Кипечри «Трактор» колхоз.

Кварталти плана икĕ уйăхра пурнăçлама пулчĕç

ЙЕПРЕÇ, январĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Леспромхоз 1943 çулхи иккĕмĕш çур çулта вутă хатĕрлесе турттармалли плана 105 процент пурнăçларĕ. Йĕпреç районĕ вутă хатĕрлемелли плана 106 процент, турттармалли плана 126,7 процент таран пурнăçларĕ. Çак районри «Коминтерн», «Коммунар» колхозсем, 1943 çулхи вăрман хатĕрлевĕн планне 170 процент тултарса, 1944 çулхи 1-мĕш кварталти плана 80 процент пурнăçларĕç. «Коммунар» колхозри Максимовпа Куликова колхозниксем вутă турттарнă çĕрте задание куллен 165—180 процент тултараççĕ.

Çак кунсенче вăрманта ĕçлекенсем М. И. Калинин юлташăн çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмахне сӳтсе явнă. Кашни ĕçлекен, хăйĕн çĕршыв умĕнчи тивĕçне тĕплĕн ăнланса, çĕнĕ çулта татах та патвăрлăрах ĕçлеме пулса, ăмăртăва тухрĕ. Леспромхозра ĕçлекенсем вăрман хатĕрлевĕн 1944 çулхи 1-мĕш кварталти планне икĕ уйăхра тултарма пулчĕç.

П. ФЕДОРОВ.
Леспромхоз директорĕ

Ăшă кăмăлпа тав тăваççĕ

Калининори педагогика училищинче вĕренекенсем кăçалхи вĕренӳ çулĕ пуçлансанах фронтовиксем валли 15 килограмм çăм пухрĕç, 150 мăшăр носкисемпе алшишсем çыхса пачĕç.

Фронтовиксем вĕренекенсене ăшă кăмăлпа тав тăваççĕ. Нумаях пулмасть вĕренекенсем фронтран çыру илчĕç: «Пире тăванла пулăшса тăни нимĕç фашисчĕсене вăйлăрах аркатма пулăшать. Сире пурне те отлично вĕренме сĕнетпĕр», тенĕ çав çырура.

Вĕренекенсем фронтпа тăван çĕршыва пулăшассине вăйлатма, вĕренӳ пахалăхне татах та ӳстерме пулчĕç.

В. ЛАНДЫШЕВ.

Летчиксене савса

Сăвви В. БАРАЕВĂН. **Музыки Ф. ЛУКИНĂН.**



Атьăр летчик (2 хут) пулар-и,
Хĕвел патне (2 хут) вĕçер-и?
(2 хут).

Унăн ылттăн укине
Пĕрчĕн-пĕрчĕн суйлар-и!

Атьăр летчик пулар-и
Уйăх патне вĕçер-и?

Унăн çутă сăн-питне
Пĕр чуптуса илер-и!

Атьăр летчик пулар-и,
Çăлтăр патне вĕçер-и?

Савнă сарă хĕрсене
Çăлтăр мăйя пиллер-и!

Атьăр летчик пулар-и,
Çĕр тавралла вĕçер-и?

Хамăр çĕршыв хăватне
Тĕнче умне çĕклер-и!

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Италири пĕтĕм фронт тăршшĕпех чĕреслетсе çумăр çуса тăни вăрçă ĕçĕсене кансĕрленĕ. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнчи Канада çарĕсем Адриатика тинĕсĕ хĕрринче тăшманăн контратакине сирсе янă та Сан-Томассо ятлă яла тытса илнĕ. Америкăн 5-мĕш армийĕнче тăракан Англи чăçĕсем тăшмана ăнăçлăн пырса тапăннă. Тусем çинче тăракан Америка чăçĕсем хăйсен маларах йышăннă позицийĕсене çирĕплетнĕ.

Англипе Германин тинĕс çинчи вăрçин çулталăк хушшинчи итогĕсем

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Шарнгорст» линкора путарнă пирки нимĕçсен тинĕс-çар флочĕн вăйĕ нумай чакнă. Англи суднисем тинĕссемпе океансем тăрăх ирĕклĕнех çӳреççĕ, тăшман вĕсене кансĕрлеменпе пĕрех. Çав вăхăтрах Британин çăмăл тинĕс-çар вăйĕсем нимĕçсен караванĕсене вăйлăрах та вăйлăрах атакăлама пуçланă.

Иртнĕ çулталăк хушшинче нимĕçсем Англин суднисене пĕр хут çеç вăйлăн атакăлама хăтланнă. Çавăн чухне тăшманăн 4 торпеда катерне путарнă, 7-ĕшне сиенленĕ. Англи флочĕн çухатусем пулман. Англи суднисем тĕнĕл держависен 100 суднине ытла (танкерсенчен пуçласа грузовой суднăсене тата хуралласа пыракан суднăсене çитиччен) шыва путарнă е сиен тунă. Нимĕçсем блокадăна татма хăтланнине Британи флочĕ сирсе янă. Нимĕçсем блокадăна татма сахалтан та 5 хут хăтланса пăхнă, анчах та вĕсен ĕçĕсем ăнман, блокадăран татса тухма хăтланнă чухне нимĕçсен 4 пысăк грузовой судни тата пысăк танкерĕ путнă. Çулталăк хушшинче Британи флочĕн пĕр линкор та, пĕр авианосец та путман. Англин пĕр крейсерне кăна путарнă. Британи флочĕ пуринчен ытла эсминецсем, корветсем, мина заградителĕсем тата мина тральщикĕсем путнă.

ХЭЛЛĂН ÇĔНĔ ÇУЛ ЯЧĔПЕ ЯНĂ ПОСЛАНИЙĔ

ВАШИНГТОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл Америка халăхĕ патне çĕнĕ çул ячĕпе янă посланире çапла калать: «1943 çул тин çеç пĕтрĕ, вăл пирĕн тăшмансене—тĕнĕл держависене—тĕп ренех кисрентерчĕ, çав вăхăтрах вăл пирĕн пĕрлешӳллĕ вăйсем хăватлăн ӳссе пынине кăтартрĕ. Çав вăйсем тăшмана çĕнтерчĕç. Анчах та эпир хамăр çĕнтерессине ĕненни мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсем пур ĕçре те пĕр чарăнмасăр çине тăрса ĕçленинчен килет».

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАТА ГАМБУРГА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Берлина тапăннă. Малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх, çав каçхине Берлина тапăнни ăнăçлă пулнă.

Англин ытти самолечĕсем Гамбурга тата Хĕвеланăç Германирипе Çурçĕр Францири тĕрлĕ объектсене тапăннă. Çав операцисенчен хăйсен базисене Англин 28 самолечĕ таврăнман.

КĔСКЕН

* Çак январь уйăхĕнче, урăхла каласан, срокчен икĕ çул малтан, Пĕрлешӳллĕ Штатсенче «икĕ океан çинчи флота» туса пĕтереççĕ. 1946—1947-мĕш çулсенче туса пĕтерме палăртнă нумай карапсем халĕ океансем çинче çапăçаççĕ те ĕнтĕ.

* Австрире гитлерла влаçсем халăхăн мĕнпур тумтирне регистрацилеме хушса приказ кăларнă. Тумтире январĕн 6-мĕшĕччен регистрацилемелле. Çак ĕçе халăхран тумтир пухса илес шутпа тăваççĕ.

* 1943 çулăн малтанхи 11 уйăхĕ хушшинче Англие пыра-пыра тапăннă пирки Англире 2.347 çын вилнĕ тата 3.421 çын чылай вăйлă аманнă. 1942 çулта çав вăхăт хушшинчех 3.112 çын вилнĕ, 3.948 çын чылай вăйлă аманнă пулнă.

Колхозсен çулталăкри ĕçĕсен отчечĕсене вăхăтра та тĕрĕс тăвар

Ялхуçалăх çулĕ колхозсенчи çулталăкри ĕçсен отчечĕсене тупипе вĕçленет. Вăл отчетра кашни колхоз хăйĕн çулталăк хушшинчи ĕç итогĕсене тăвать, çав отчетра вăра колхозăн пĕтĕм ĕçĕ, пĕтĕм тупăшĕ курăнса тăрать.

Сăмахран, çулталăкри ĕçсен отчечĕн VII-мĕш таблици тĕштырăсене мĕн чухлĕ валеçмеллине, акмалли плана, тырă тухăçлăхне ӳстермелли задание мĕнле пурнăçланине тата государство умĕнчи обязательствăсене мĕнле пурнăça кĕртнине кăтартать. 15-мĕш таблица тупăшпа расход сметине тултарнине тата укçан илнĕ тупăша колхоз мĕнле валеçнине кăтартать. II-мĕш таблицăра çулталăк хушшинче мĕн чухлĕ ĕçкунĕ расходланине тата вĕсем тăрăх мĕнле тырпул, пахча-çимĕç тата укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ валеçнине курма пулать. XI-мĕш таблицăран выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана мĕнле пурнăçлани курăнать. Отчетăн кашни пайĕ колхозăн çулталăкри ĕçĕсене çутатса парать.

Республикăра малта пыракан колхозсем çулталăкри ĕçсен отчечĕсене тума тахçанах тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе Ишлей, Вăрмар, Етĕрне районĕсенчи тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем начар мар ĕçлесе пыраççĕ. Çак районсенчи нумай колхозсенче колхоз пурлăхне инвентаризаци тума, ревизи комиссийĕсем — çулталăкри ĕçе тĕрĕслеме тытăннă та ĕнтĕ. Колхоз счетовочĕсен районри канашлăвĕсене туса ирттернĕ. Ку тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕсен инструктор-бухгалтерĕсем аван ĕçлеççĕ.

Анчах Тăвай, Калинино, Куславкка, Çĕрпӳ районĕсенче ку тарана çитсе те колхоз счетовочĕсен районри инструктивлă канашлăвне ирттермен. Инвентаризаци тăвас ĕçе январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлемеллеччĕ, апла пулсан та, чылай колхозсенче ку ĕçе халĕ те тытăнман. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем çулталăкри ĕçсен отчечĕсене тăвассине хакламаççĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ иртнĕ çул колхозсен çулталăкри ĕçĕсен отчечĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн вĕсенче пысăк йăнăшсем тупрĕ. Сăмахран, Тăвай районĕнчи Смидович ячĕпе тăракан колхозра уйхиртен пухса илнĕ тырпулпа пахча-çимĕçсен 5—6 процентне шута илмесĕр хăварнă. Çакă вăл пĕтĕм тупăшăн пĕр пайне çĕртсе пăсние е вăрланине пĕлтерет. Çак çитменлĕхе Тăвай районĕнчи çĕрĕç пайĕ курмасăр тăнă. Кăçал пирĕн колхозсенчи çулталăкри ĕçсен отчечĕсене тĕрĕс тăвас пулать. Çулталăкри ĕçсен отчечĕсене сӳрĕккĕн туни е ăна хакламанни—сиенлĕ. Çакăн çинчен колхозсен руководителĕсене çирĕппĕн асăрхаттармалла.

Колхозăн çулталăкри ĕçсен отчечĕ вăл ĕç итогĕсене пухса пĕтĕçтерекен документ кăна мар, вăл çав вăхăтрах колхозниксен умне çĕнĕ те боевой задачăсем лартса, вĕсене пурнăçлама мобилизацилекен документ пулса тăрать. Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра общественнăй пурлăха хытă сыхламалла, ăна тĕрĕс шута илмелле, тупăшпа расхода тĕрĕс туса пымалла, тупăшсемпе тырăсене колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх тĕрĕс валеçсе памалла. Вăрăсемпе кахалсен аллине пĕр пĕрчĕ тырă е колхоз тупăшĕн пĕр пус укçи те ан лектĕр.

Районри çĕрĕç пайĕн инструктор-бухгалтерĕсем, агрономсем, зоотехниксем колхоз счетовочĕсене çулталăкри ĕçсен отчетне тума куллен пулăшса пымалла. Нумай колхозсенче опытлă счетоводсем ĕçлеççĕ, вĕсен опытсăртараххисене пулăшас пулать. Çапла туни, пĕр енчен, пĕрпĕрин опычĕпе паллашма пулăшать, тепĕр енчен, çулталăкри ĕçсен отчетне вăхăтра туса пĕтерме май парать. Çакăнпа пĕрлех опытлă счетоводсене райçĕрĕç пайĕсен штатра тăман инструкторĕсем тумалла, вĕсене колхозăн çулталăкри ĕçĕсен отчетне тума уйрăм колхозсем çумне çирĕплетмелле.

Çулталăкри ĕçсен отчечĕсене тунă чух колхозри учет ĕçне йĕркелесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Колхоз счетовочĕсем часчасах тупăшсемпе расходсене уйăх вĕçĕнче çеç кĕнеке çине çыраççĕ. Çапла вăра уйăх хушши документсем кирлĕ пек çырăнмасăр выртаççĕ. Çакăн пек туни вăл колхозăн çулталăкри ĕçĕсен отчетне тунă тапхăрта колхозăн тĕрлĕ счечĕсене хупма чăрмантарать. Кая юлнă цифрăсене шыраса, иртнĕ уйăхсенчи документсене çырса, нумай вăхăт иртет. Отчет çырма тытăначчен мĕнпур тупăшсемпе расходсене тĕп кĕнекесем çине çырса пĕтермелле, унтан вара колхозăн счечĕсене хупмалла.

Колхозри учета тĕрĕслесе çитменлĕхсене пĕтерниипе пĕрлех, колхозри пурлăха инвентаризацилес пулать. Ку ĕçе вара колхозри актива тата ревизи комисси членĕсене анлăн явăçтармалла.

Çулталăкри ĕçсен отчетне тума тытăничченех малтан колхозăн çулталăкри производство планĕпе тĕплĕн паллашмалла, ун хыççăн вара çулталăкри ĕçсен отчетне тăвасси çăмăлланать.

Çулталăкри ĕçсен отчетне тунă чухне уйрăмăнах устав тăрăх уйăрса хăварнă колхозри фондсене мĕнле шута илсе пыни çине тĕплĕн çавăрăнса пăхмалла. Нумай колхозсенче çав фондсене тĕплĕн шута илсе пыни çук-ха. Çулталăкри ĕçсен отчетне тунă чух çав фондсенче мĕн юлнине тĕплĕн тĕрĕслемелле, мĕн пуррине кăна çырса хумалла.

Çулталăкри ĕçсен отчетне тунă çĕре колхозниксемпе колхозницăсен йышлă массине явăçтарас пулать, отчета колхозниксен аслă пухăвĕнче çирĕплетмелле.

Отчетлă пухусем колхозăн çулталăкри ĕçне тур енчен те çутатса пама тивĕçлĕ. Çав отчет колхозниксемпе колхозницăсене фронтпа çĕршыва пулăшма мобилизацилетĕр, ĕç дисциплинине татах та çирĕплетме пулăштăр. Колхозăн отчетлă пухăвĕсене тĕрĕс ирттерни, колхозниксемпе колхозницăсене отчета сӳтсе явнă чухне тĕрĕс ертсе пыни, кирлĕ пек критикăна тивĕçлипе сарса яни кирлĕ. Пухура колхозниксем кашни бригадăн, фермăн, кашни звенон ĕçне тишкерсе тухчăр. Отчетлă пухура ĕçкунĕсем çине хушса тӳлемелле илме тивĕçлĕ колхозниксен списокне тĕплĕн пăхса тухмалла, стахановецсен тата малта пыракан колхоз членĕсен ĕçĕпе паллашмалла. Çакăнпа пĕрлех колхозра япăх ĕçленĕ, ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксене, колхозпа тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пурнăçласа пыман членсене тăрă шыв çине кăлармалла.

Отчетлă пухура колхоз ĕçĕнчи çитменлĕхсене, вăл çитменлĕхсемшĕн камсем айăплине тĕплĕн каласа памалла тата вăл çитменлĕхсене пĕтермешкĕн пĕтĕм колхозниксене мобилизацилемелле.

Колхозăн отчетлă пухăвĕ йышăннă решени—колхозшăн та, çавăн пекех колхоз членĕсемшĕн те закон пулса тăрать. Çавăнпа та ăна пĕр тăркаланмасăр, хăвăрттăн пурнăçласа пымалла. Отчетлă пуху иртнĕ хыççăн, отчета тивĕçлĕ органсем çирĕплетсен, колхоз правленин натуральнăй фондсене йĕркелемелле те тупăшсене валеçме тытăнмалла. Ĕçкунĕсем тăрăх тивекен тырăсемпе укçа-тенкĕсене пĕр чарăнса тăмасăр колхозниксене валеçсе памалла.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçлесе тухăçлă тырпул туса илчĕç. Кăçал, 1944 çулта, татах та лайăхрах ĕçлемелле. Эпир лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр, мĕншĕн тесен вăрçă вăхăтĕнчи çулсем пире нумай чаплă опыт пачĕç. Вăл опытпа малашнехи ĕçре анлăн усă курмалла.

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсен çулталăкри ĕçĕсен отчетне 1944-мĕш çулхи январĕн 25-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме хушать. Çак кăтартнă срокра пирĕн республикăри колхозсем çулталăкри отчетсене туса пĕтерме пултараççĕ тата туса пĕтерме тивĕçлĕ те. Çакна тăвас тесен, ĕçе пĕлсе йĕркелени, социализмлă ăмăртăва сарса яни тата çак ĕçе колхозниксен анлă массине явăçтарни кирлĕ.

И. КОСМИНСКИЙ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планпа финанс отделĕн начальникĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленнoçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.